Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# Капкăн

8 мĕш №:



Т а в а р  и л е к е н: Ма лайăх виçмесĕрех илсе паратăн вара?
П р и к а ш ч и к: Курмастăни вара есĕ, походлă панине.
(хăш-пĕр прикашчиксем мĕнле виçсе панине асăрхасах тăмала).

# Прикашчик

Канаш р-чи Вăрăмпуç йал кооператив прикашчикĕ Вакăв Христун пĕр уйăх ĕçлесех 750 тенкĕ растратă тунă.

Кооператив пирĕн самăр,
Ун ăшне есир пăхсамăр:
Ах-ти мур!
Пăх та кур!
— Тем тесессĕн тем те пур!
Чĕререн ăна йуратăн,
Кĕрсенех куçпа куратăн:
Вакăвсем...
Çўп-çапсем...
Ах илемлĕ-çке мурсем!
Ĕçлеме те питĕ пĕлнĕ,
Тавар хакĕ те йўнелнĕ:
Пĕр кĕренке пулă пур,
Çур червонцă.. йўнĕ мур!
Ак кунта епĕр тăратпăр:
— Здравствуй, Вакăв, кооператăр.
Йепле пурнан? Мĕн паран?
Тупăш йепле лавкаран?
Сăмах чĕнмест, ой-ой-ой!
Чĕлхи çĕтним. Пуť немой?
Вакăв, кил-ха, ес ан тар,
Пĕр хўре хăť пулă пар!
Кам çуратнă-ши ăна?
Шарламасť каллех кайаннăй!
Еккей, пулаť кам чĕре:
Пурнаť значит тĕнчере!
Йумахлама ку çын маннă,
Хăй вĕт славни шыçмакланнă:
Тумтири хуçа пекех—
Канфет çийет хăй текех.
Пĕр кĕтессе кайса ларчĕ,
Кĕсйерен канфет кăларчĕ.
Сăнĕ лайăх. Пит хитре,
Касăр сăмси пĕр витре!
Акă пычĕ матур хĕр,
Хайхи Вакăв хĕпĕртерĕ:
— Килех, тусăм,
Еп—хавас...
Ну, кала-ха, мĕн парас?
Кулкалаť леш хĕрĕ вирлĕ,
Тути хĕри хăйĕн хĕрлĕ.
Пичĕ—шурă,
Пăх, палла:
Шкатит тунă пурпала.
— Ех, ес тусăм, Вак Христунĕ,
Укçине ара кам тунĕ?
Сахăр пар-ха кĕтмеле...
Çурри пултăр пĕтмеле.
— Йурĕ, йурĕ! Савнă хĕрĕм...
Сана арăм тăвас терĕм...
Илех, акă шоколад.
Касхине пойдем гуљаť.
Кирлине Христун турттарчĕ,
Паллах, хĕрĕн хуйхă тарчĕ.
— Сывă пул-ха,—вĕçмеле...
Еп кайам-ха килеле!
Ах, прикашчикăн апачĕ...
Хай хĕре канфет та пачĕ.
Тухса шурĕ леш вара,—
Канфет хыпнă çăвара...

* *
*

Халăх сучĕ ĕç пуçланă,
Пирĕн Вакăв кĕç çакланнă.
Ак ăçта вăл шоколад.
Христун тути йăл „кулаť".
Ĕçĕ—уçă. Ĕçĕ—паллă.
Укçа тухман çичçĕр аллă...
Ах, прикашчик,
Мăн тута,
Унпа лекнĕ вăл сута!
Сут пит лайăх ăс-тăн пачĕ.
Пĕр çулталаскăх ĕç пачĕ.
Ну, прикашчик, хĕперте,
Шлепкелентĕн есĕ те!

**Марк Аттай.**

---

# Пахчари кушак

Филипов питĕ лайăх çын вăл. Есĕр Филипов камне пĕлместĕр. Филипов Канаш районĕнчи Асхва йалсовет çекретарĕ пулаť. Есĕр Филипов мĕн йуратнине пĕлместĕр пулсан, каласа парăпăр. Кушак шăшийе мĕнле йуратаť, пирĕн Филипов та пахчари панулмисене çавăн пекех йуратаť. Филиповăн уйрăмлăхĕ те çакă çеç.

Йалсоветăн кулакран туртса илнĕ пахча пур. Панулмисĕр улма йăвăççисемпе хуçăк туратлă çĕмĕрт йăвăççин тураттисем хушшинче пуш вĕллесем хăлтăртатса ларассĕ. Вĕсен ăшĕнчен сăпсасем, йе симĕс шăнасем нăйлатса вĕçсе тухса кайассĕ.

Пĕр çамрăк ачапа хура кĕпелĕ хĕр Филипов хушнипе пахчара тăрăшсах ĕçлессĕ. Ачи çĕмĕрт тăрне хăпарса кайнă та Филипова турачĕпе те, сапакăн та çĕмĕрт хуçа-хуçа параť. Хĕрĕ улмуççирен улмуççи çине çўресе панулмисене ревиçилет. Филипов хăй ват ĕне пек лап сарăлса выртнă кавĕлесе панă çимĕçсене çăтса выртӑť.

Филипов хăй çĕмĕрт тĕрне тем тусан та хă[illegible] рас çук, мĕншĕн тесен унтан çуртри выраканс[illegible] курма пултарассĕ. Йалсовет пахчинчи кайăк те[illegible]рен хăраť Филипов. Унтан çăлăнма чейелĕх йа[illegible]лă ăсĕ пур Филиповăн.

Çавăнпа та Филипов Анат Сурăмри Мирун ку[illegible] йуррине йурлаť:

„Пахчи пахчи,
Йалсовет пахчи,
Улма çисе ўсрĕмĕр".

Филипов ўснĕ, каччă пулнă. Анчах есĕр ăна [illegible] хăçан та йалсовет канцељаринче кураймăр. Кур[illegible] тесессĕн те йалсовет пахчинче çеç курăр.

**К. М. Гени-Гељ**

# Велосипед

Район центӑрне ҫитнӗ ҫӗре лашам тарларӗ. Тарламастчӗ пулмала та, анчах иртерех ҫитес тесе васкарах хӑваларӑм пулмала. Ҫывӑх ҫул мар, пӗре килнӗ пек чухне райҫӗруправленине те, райфона та кӗрсе ӗҫсем тумала. Ҫавӑнпа та уҫӑрах килсе ас ҫитес тесе лашама хӑваларах патӑм.

— Райҫӗруправлени пуҫлӑхӗ пур-и?

— Пурчӗ таха, ответлет ҫинчерех ҫамкалӑ хӗрӗк куҫлӑскер. Вӑл камне епӗ пӗлместӗп.

— Час килет-ши?

— Темле.

— Мӗнле темле, есӗ хусамӑр служӑшчисене пӗлмесен—кам пӗлмеле, чӑтаймавниҫе сасса хӑпартарах ыйтрӑм.

— Есӗ мӗн манпа харкашатӑн, епӗ хам та Уйкас колхозӗн председателӗ Иванов пулатӑп вӗт, Райҫӗруправлени пуҫлӑхӗ ҫук пирки ҫеҫ унӑн вырӑнне чӗлӗм туртма кӗрсе лартӑм.

— Ай, апла-и.

— Ҫапла ҫав.

— А есӗ йулташ, ыйтрӑм теприччен.

— Епӗ тожӗ.

— Мӗн тожӗ.

— Йалсовет председателӗ.

Ларсан-ларсан ахалех ҫавӑрӑнса тухрӑмӑр.— Маттур ӗҫлеҫҫӗ шелмӑсем, 7—8 служӑшчирен пӗри те йулман, пурте йала колхозсене саланнӑ ӗнтӗ, тесе тухрӗ ман хыҫран пӗри.

Кӗтӗм Райҫутпайне. Кӗҫӗн вӑтам шкул директӑрӗ кӗнекесем илме хушса йанӑччӗ те ҫавсене тийесе кайас тетӗп.

— Сывӑ-и, терӗм кӗрсенех. Мана хирӗҫ пӗри те пӗр сӑмах чӗнмерӗҫ. Сӗтелсем хушшинче пӗри тетраҫ ҫине кӑтра ҫӳҫлӗ майрасем ӳкерсе ларать, тепри шӗвӗр шалча пек метӑр тӑршӗ чӑрканӑ ыкаркка ӗмет, виҫҫӗмӗшӗ ҫисе йанӑ хӑйарӑн хуппине тураса ларать.

— Сирӗнтен хӑшӗ кӗнекесем парса йараканни, ыйтрӑм вӑхӑта нумай иртерес мар тесе.

— Епӗр хамӑр та кӗнекесем патне килсе те, ни Райҫутпайӗн пуҫлӑхӗ, ни инспектӑрсем ҫук терӗҫ. Вирлӗ ӗҫлеҫҫӗ значӑт, ӗнсиҫене те хыҫма вӑхӑт тупаймаҫҫӗ, шкулсене ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне аван хатӗрлентерес ӗҫпе хыпаланаҫҫӗ, тесе тухрӑмӑр.

— Райфо ҫакӑ пулчӗ-и?

— Ҫакӑ та-ха.

— Кам ҫакӑнта чек ҫырса парать?

— ?

— Ай ҫырса параканӗ ҫук-и?

— Ҫук ҫав, йала кайнӑ пулмала.

— Да, йала кайнӑ пулмала. Ну мӗн тӑвӑпӑр-ха ӗнтӗ вулаканӑм. Чӑнахах учрежденинчи йулташсем йалсене, колхозсене саланнӑ пулсан аванччӗ. Вара епӗр те тепӗр чух килме килӗшӗпӗр. Анчах тӑхта-ха, ҫав Райфо пуҫлӑхӗ Коротков йулташ мар-иха?

— Ҫавӑ, ҫавӑ!

— Ей йулташ. Ан кай-ха, икӗ уралӑ кӗсруна тӑрат-ха, кӑшкӑртӑм, района килнӗ чухне пӗр ӗҫне те пулин туса кайас тесе.

— Ҫакӑ хут тӑрӑх есӗр-и чек ҫырса параканӗ?

— Епӗ мар. Авиҫӑ ман хыҫран манӑн бухгалтӗрсем велоҫипедпа килеҫҫӗ. Вӗсенчен ыйт,—терӗ те ларчӗ те вӗҫтерчӗ.

Чӑнахах унӑн хыҫӗнчен 15—16 ҫын велоҫипедпа йӑрлаттарса килеҫҫӗ. Йӑр й-ӑ-ӑ-р кайаҫҫӗ. Кайсан кайсан пурте пӗр харӑс чӑнкӑ-ӑ-р тутарса илеҫҫӗ. Ҫавӑ 15—16 ҫын хушшинче 1—2 ҫынна ӑҫтан паллан. Хыҫҫӑн кайам-ха, тен чарӑнӗҫ. Чупрӑм хыҫҫӑн. Район центӑрӗн хӗрне ҫитсен кайала ҫавӑрӑнчӗҫ те мана хирӗҫ килме тытӑнчӗҫ. Хытӑ килеҫҫӗ. Кӗҫех хама таптаса кайачӗҫ. Иртсе карӗҫ, курӑнми пулчӗҫ. Ҫапла аппаланса ҫӳресен чылай вӑхӑт иртсен РИК ҫуртне кӗрсе, Райҫутпай инспектӑрӗн сӗтелӗ умне пытӑм.

— Инспектӑр есӗр пулатӑр-и?
— Епӗр.
— Кӗнекесем илсе кайасшӑнччӗ те.
— Кӗнекесене инспектӑр памасҫ, а кӗнеке параканӗ велоҫипед ҫинчен анмасӑрах киле карӗ.
— Кунта ӗҫ тухмарӗ.
— Райзо пуҫлӑхӗ есӗр и?
— Епӗ.
— Ҫавӑ ӳлӑштарнӑ тыррӑн квитанципе укҫа...

— Ты что колхозник, халӗ 5 сехет ҫитет, а есӗ укҫа илесшӗн ҫӳретӗн. Ну кайӑпӑр.

Ҫаварне курак пек карчӗ те 5—6 ҫын велоҫипечӗсене ҫавӑтрӗҫ те тухрӗҫ те кайрӗҫ. Епӗ тепӗр пӳлӗме ҫеҫ кӗрсе тухасшӑнчӗ, анчах сарлака тупалӑ сторӑш кутран тапсах кӑларса йачӗ. „Вирлӗ ӗҫлеҫҫӗ шелмӑсем". Малала та кун пекех ӗҫлесен велосипечӗсем ҫине ларса кутран тапсах килеле ӑсатмала пулать пулӗ.

**Ил. Сӳпенке.**

# Паллашăр

Епĕ камне, епĕ мĕнле ҫынне, епĕ мĕнле формăлине есĕр никам та пĕлместĕр. Епĕ хам пĕлетĕп, пĕлсен те калама ман хăйу ҫитеймест. Ну, есĕр, вулакан йулташсем, калама пултарăр ҫапла, каламасан шутлама:

— Ҫын, пуҫлă, пуҫ ҫинче куҫ, хăлха, тата шăршă пĕлекен сăмса текен йапала пур тейĕр есĕр. Ку чăн-ха ĕнтĕ.

Калаҫакан оргăн, тута текен йапалине пытарса хăварсан вара епĕ ҫын майĕ ăҫтан пулатăп-ха. Епĕ урампа иртсе пынă чухне ман ҫине кам пăхас килсе пăхĕ вара.

Конешнă, манăн тута та пур. Епĕ вара калаҫма питĕ те йуратататăп. Сарă, кăтра ҫӳҫлĕ, хĕрсене йуратнинчен те ытларах йурататăп ташĕ калаҫма.

Вăт, епĕ пыратăп урампа, чĕлхем калаҫать. Йулташсем итлеҫҫĕ, епĕ хам итлетĕп-и итлеместĕп-и, вăл сире кирлех те мар пулĕ.

Урампа пыратăп, чĕлхем калаҫать терĕм вĕт-ха епĕ сире. Утатăп, калаҫатăп. Ним палламан, йут ҫынсемех ман сăмахсене итлеме тытăнаҫҫĕ. Вара хĕрлĕ плошчĕтрен Атăл хĕррине тухичен ман ҫумра пĕчĕк театăр пулать.

Пурте пĕҫҫисем тăрăх аллисене шарт ҫапсах кулаҫҫĕ.

Чăнах та, пăхатăп епĕ хамăн зрителсем ҫине, пурте кулаҫҫĕ. Шурă шăлĕсем тухса ӳкес патнех ҫитнĕ. Ҫавна курсан епĕ хам та хăраса ӳкрĕм. Ҫавăнпа та калаҫма чарăнтăм.

Тӳррипе каласан, епĕ хам чĕлхепе калаҫсан ҫынсене култарма пултаратăп. Халĕ ĕнтĕ, тата ҫырса пăхас тетĕп.

Алфавитăн пĕрремĕш саспаллине алла май йарса тытамха—„а" саспаллине. Ҫав „а" саспаллинчен пуҫланакан хушаматсенчен чи йуратни те маншăн Афанаҫĕв хушамат пайанлăха. Малала кама, мĕнле хушамата йуратасси паллă мар-ха мана.

Епĕр, унăн йатне Феодăр тесшĕн. Ҫапла ĕнтĕ халĕ хушамачĕпе йатне пĕрле хушар та, Афанаҫĕв Феодăр тăвар.

Епĕ сире ҫав Афанаҫĕв Феодăрпа паллаштарасшăн. Вăл та ман пекех, пуҫлă, пуҫ ҫинче куҫ, хăлха, тата шăршă пĕлекен сăмси, путылкăри ерех хăш шкапра ларнине сăра пички хăш нӳхрепре ларнине пĕлекен сăмси, сĕт-ҫу, аш-какай, ҫăмарта тутипе сĕткенне пĕлекен тути-ҫăварĕ, чĕлхи, тата ытти те пур.

Ҫавăнпа та епĕ сире хам та паллаштарнинчен нимĕн усси те ҫук пулĕ тетĕп.

Афанаҫĕв Феодăрпа паллаштарсан усăлă та п

Афанаҫĕв Феодăр ватă комунис Тутаркас йонĕнчи Утаркă йалĕнчи „Пархатар" колхоз п ҫедателĕ пулнă вăл.

Ĕҫленĕ колхозра. Ĕҫленĕшĕн тырăн та, укҫ илнĕ. Нумай илме тăрăшнă.

Шупашкарти йалхуҫалăх снабженине авăн мали машинсем тата плугсем илме заказ панă п

„Ҫав числана Шупашкара машинсем илме ҫ Илме килмесен урăх колхозсене сутатпăр" ҫырса пĕлтернĕ хут ҫитнĕ „Пархатар" кол Колхозниксем темĕн пекех илме кайасшăн п

— Епĕ хамах кайатăп...

— Ыран кайатăп,—тенĕ Афанаҫĕв Феодăр. Ҫ вара „Пархатар" колхоз машинсем илмесĕрех са йулнă. Кайран, вăхăт иртсен, Афанаҫĕв Ф та сив чир тытса силенĕ пек чĕтресе ӳкет.

Уйра, ыраш сапсарă ларать. Тырă вырмала шинсем ҫук.

— Патушки... Тор ҫырлахах... Ăҫта маш тупас, ăҫта илес? Патушки,—тет Афанаҫĕв.

Атăл тăрăх анатала икĕ колхозникке маш шыраса тупса илме командировка кăларса й Васкавлă, питĕ васкавлă. Тырă вырмала. Ма сем кирлĕ. Обйазателнă тупса килĕр!

Уйра, пур кĕтесре те колхозниксемпе йе личниксем тырă выраҫҫĕ. „Пархатар" колхозĕн чăк машинă Атăл тăрăх ишсе хăпарса Шупа пристăнне ҫитсе выртнă. Атăл шывĕ хумхан пăхса уйра хумханса ларакан тырра аса иле машинă хуйхăрса йарать.

Афанаҫĕв кахаллипе ҫапла пулнă. Ку ҫеҫ-и та ыттисем питĕ нумай... Растратă.. Колхоз йапăхтарнăшăн.. Колхозра сысна ферми т шăн тата ытти те нумай.

Афанаҫĕв Феодăр председател постинчен п тасату вăхăтĕнче йатăнса аннă.

Тасату комиҫҫи:—Партирен кăларас,—тенĕ.

Ку сахалха, теҫҫĕ колхозниксем. Пролетар чĕн скамйи ҫине лартма кирлĕ ăна,—теҫҫĕ ко никсем.

Вулакан йулташсем, Афанаҫĕв Феодăрпа пал рăр пулмала.

**Ваҫ. Регинсон.**

# Архивра




**Кулак:** Итле-ха хӗрӗм, есӗр ҫав мана никҫанта суту-илӳ туман тесе хут туса парӑр-ха.
**Архивра ӗҫлекен:** Ҫук, епӗр сире ун пек хут памастпӑр. Хӑвӑр йалсоветра илӗр.
**Кулак.** Йалсовет памасӑ ҫавӑ, панӑ пулсан епӗ сирӗн патӑра килес ҫук та.

# Аслисем... аслисем... тата аслисем... пурне пĕрле хушсан волокитчĕксем

Йетĕрне районĕнчи Урапакасси йалповĕнчи пуçлăхсем кашни хăйне ма приказсем параççĕ прикашчика. Çавăнпа та колхозниксен пĕр-пĕр тава илме кооператив лавкине темиçе хут çитмеле.

Епĕ кооператива чылай вăхăт, пĕр ик-виçĕ уйăх та пулаť пулĕ кайса курманчĕ. Пайан, августăн 20-мĕш кунĕнче, 20-мĕш числа йачĕпе кайса курас терĕм. Кайассине пирус илес, тесе кайнăчĕ те, пирусĕ çук пулчĕ. Ман хыççăнах Укçук инке те пашкаса çитрĕ, хăй аран сывлаť, питĕ васканă пулмала. Васканă çав, çавăнпа вăл пырсан тÿрех:

— Кооперативра витре пур теççĕ, пур-и? Манăн шыв ăсма витре çук; пайан витре çук пиркийех алăпа шыв ăсма карăм та, пĕр тумлак та ăсса килеймерĕм, кайран аран-аран куркапа кайса, пĕр курка ăсса килтĕм,—тесе витре ыйтрĕ вăл, стойккă хушшинче тăракан Тихушкин прикашчикран.

— Пур,—ответлерĕ Тихушкин, Укçук инке ыйтнине хирĕç. Пурине пурах тес пулаť çав...

— Камсене параттăр.

— Пай укçисене тÿлесе татнисене пурне те. Есĕ тÿлесе татнă-и, татнă пулсан паратпăр.

— Ех, ман кĕнеке васканипе килех йулнă.

— Апла пулсан киле чуп, кĕнекесĕр памастпăр.

Укçук инке киле вĕçтерчĕ те... Пĕр вунă вуникĕ минутран калла, вĕçтерсе те çитрĕ.

— Ну халђ кĕнеке илсе килтĕм, витре пар.

— Халђ кĕнекепе памастпăр... Çăмарталла çеç, кашни витре пуçне пилĕк çăмарта та 2 тенкĕ те 58 пус укçа. Закупщчик—Глазков йулташ çавăн пек приказ парса хăварчĕ, вăл манран аслă çын... Епĕ унтан иртме пултараймастăп.

— Йурĕ еппин. Манăн, килте, çăмартасем пур,— терĕ те, каллех киле тухса вĕçрĕ.

Тепĕр вунă-вуникĕ минутран Укçук инке каллех лавкана персе çитрĕ. Ун пичĕ тăрăх пăрçа пек тар йухаť...

— Ну, халĕ çăмарта илсе килтĕм, витре пар. Илетĕпех ĕнтĕ тесе килчĕ пулмала вăл.

— Халђ анчах йалпо председателĕ— Йандайкин й-ш килсе патшалăха тырă паракан çынсене çеç, тырă панă квитанципе пама хушса хăварчĕ. Вăл Гладковран асли, епĕ вăл каланинчен хамăн майа татсан та иртме пултараймастăп. Витре илес пулсан тырă панă квитанци кирлĕ пулаť... Акă сана мăшкăл.

— Ара епĕ тыррине тахçанах парса татса, квитанцийĕ килте,—тесе вăрăмăн сывласа илчĕ те, татах киле вĕçтерчĕ...

Тепĕр вунпилĕк, çирĕм минутран каллех лавкана персе çитрĕ Укçук инке. Кунче илетĕпех тенĕ пулмала, çавăнпа та вăл квитанцине кăларса:

— Ну халђ квитанцине илсе килтĕм, витре пар, текех киле ан уттар,—тесе Тихушкина тыттарма тăчĕ.

— Халĕ пĕтĕм кооправлени патшалăха çăм парса татнă çынсене çеç, çăм панă квитанципе пама строгий приказ парса хăварчĕç... строгий приказран иртме пултараймастпăр,—ответлет Тихушкин.

— Çăмне те парса татсаччĕ, те квитанций килте. Ма паçăрах каламарăн. Каланă пулсан, ил се килеттĕм.

— Айта илсе кил. Унсăрăн витре памастпăр.

— Ах... кăшт ларса канам-ха, пĕтĕм вăй кайс килчĕ, урасем те ыратакан пулчĕçĕ. А-а-ах,—тес канма ларчĕ. Унăн пичĕ тăрăх çăмăр çунă пек ху ра тар йухнине, вăл ларнă тĕле кăвакал чĕпп ишсе çÿремелĕхех пĕчĕк кÿлĕ пулчĕ. Миçе витр тар пулĕ-ши унта. Анчах Укçук инке витре ил мен те-ха виçме пултараймастпăр. Тен качче витре илĕ вăл, ун чухне виçĕпĕр те, пĕлĕпĕр.

Вăл кăшт ларса кансан каллех килнеле вĕçтер чĕ, тепĕр минутран каллех лавкана çитрĕ.

— Ну халĕ çăм панă квитанцине илсе килтĕм...

— Çук, халĕ çăм панă квитанципе памастпăр. Çăм панипе çеç мар, нимĕнле квитанципе те памастпăр. Мĕншĕн тесен пайан ревкомисси килмен. Вăл пуринчен те асли, çавăнпа та пама хăратăп. Вăл килсен тен аш парса татнă çынсене çеç пама приказ параť пулĕ. Пирĕн аслисем нумай, епĕ аслисенчен хăратăп. Укçук инке каллех витре илеймерĕ, ир пуçласа каçченех лавкана чупрĕ, çапах та илеймерĕ. Тар йухтарни пустуйах пулчĕ.

Епĕ паçăр Укçук инке витре илсен унăн тарне витрепе виçсе пăхас тенĕччĕ. Ан ÿпкелĕр, йулташсем, шантарни пустуйахах пулчĕ. Мĕншĕн тесен Укçук инке витре илеймен пирки виçсе пăхаймарăмăр.

Пуçлăхсем нумай... кашни пуçлăхĕ хăйне май приказ параť. Пĕр кун хушшинче, 100 приказ. Прикашчик Тихушкинăн чăнах та аптрамала, 100 пуçлăх, 100 тĕслĕ приказ... хăшинне итлемеле, хăшинне ĕненмеле.

Ну, вулакан йулташсем, мĕн тупрăр есĕр халђ кунта. Макăрмали-и, йе кулмали. Паллах, кунта, кулмали нимĕн те çук, макăрмали çеç. Пĕр йапалашăн лавкана çĕр хут çитсе те илеймесен такам та макăрмала.

— Çакна пустуйах çырнă, тесе шутлаттăр пулĕ. Укçук инке пек утакансем сахалах пулсан. Хам та пĕр пилĕк хут çитсе аран-аран пĕр витре илсе йултăм. Манăран та ĕненместĕр пулсан „Йамос“ колхозĕнчи Илле Митричă арăмĕпе Айдак Т. арăмĕнчен ыйтса пĕлме пултаратăр, вĕсем те манашкал пĕр йапалашăн виç-тăват хут лавкана çитрĕç.

Çавăнпа та йĕплĕ çăмах çитерни кирлĕ пулмалах та.

**М. Дангӗр.**

# Хума—культарчӗ йала

— Ӗҫсӗр аптраса кӗрӗк арки йӑваласа ларнӑ вӑ-
ра хӑш-пӗрисем ҫапла йумах чӑсатчӗҫ. „Пулнӑ тет
ӗк Йӳхмара пӗр Хума. Хумайӑн пулнӑ пӗр кӗс-
унпала ҫӳренӗ тет Хума пӗрмайах ӗҫке. Ӗҫнӗ-
нӗ тет ҫынсем патӗнче, хӑй ҫынсене ӗҫтермен тет
е те. Ҫынсем ҫиленнӗ те Хумана ӗҫтерме пӑрах-
Ҫакӑн пек йумаха ӗнерех архива хумала пул-
та, ку йумаха пайана тӑсаҫ-ха. Халӗ йумахри
а ҫинчен мар, чӑн-чӑн Хума ҫинчен сӑмах пы-
а.

— Епӗр пайан Йетӗрне районӗнчи Мӑн-Сӗнтӗр
ӗнче пурӑнакан Хума ҫинчен ҫырнӑ йумах чӑн
лӑ йапалах вара. Итлӗр хӑлхусене тӑратсах.
а ҫинчен калатпӑр.

— Куштан Хума,—тесе чӗнеҫҫӗ ӑна Сӗнтӗрте. Ан-
епӗр ӑна Куштан Хума тесе тӑрӑхласшӑн мар.
ӑнпа та ӑна:—Волкӑв Хума Лӑриванчӑ тесе,
йачӗпе калатпӑр. Ҫапах та Хумаран кулмаш-
тӑхтаса тӑмӑпӑр. Вӑл пирӗнпе килӗшме кир-
. Мӗншӗн тесен, чӑн пулнӑ ӗҫ ҫинчен калатпӑр.
мах мар ку, чӑн. Апла пулсан, чӑн сӑмахӑн су-
ҫук теҫҫӗ вӗт.

— Малтанах ҫакна калас пулать: Хума Лӑриван-
колхозник марха вӑл. Колхоза кӗмен еппин.
ҫыннисем пӗр майах Хумана ҫапла каланӑ:
— Хума, кӗрсем колхоза,—тенӗ.
Хума вӗсене ҫапла ответленӗ:
— Арӑм кӗмест, куштан манӑн арӑм,—тенӗ.
— Ей, калаҫатӑн ҫав кирлӗ мара. Йеппи ҫиппин
йулмасть, теҫҫӗ. Есӗ ху кӗрсен арӑму та кӗрет
ӗ колхоза,—тавӑрнӑ Хумана хирӗҫ колхозник-
.
Ҫапах та пӗр майах сӑлтав шыранӑ, хушӑран
ла та каласа пӑхнӑ:
— Айӑксӑр пултӑм, ӗнер кӑна аслӑк ҫинчен ӳк-
.. Ӗҫлейместӗп,—тенӗ Хума.
— Ара, айӑк текенскер тӳрленет вӑл, ӗмӗрлӗхех
ман пулӗ,—тавӑрнӑ каллех Хумана.
— Апли апла та ачасем ҫамрӑк ман, ҫитменни
йышлӑ,—Хума татах чакаланнӑ кайала. Хума
ӗннех ҫапнӑ. Пӗр майах кайала тапалашнӑ. Ху-
халӗ те уйрӑм хуҫалӑхра.
Вӑл ҫапла та-ха, анчах Хуманӑн кӑҫал та тырӑ
мала пулнӑ вӗт-ха. Ыраш пулса ҫитнӗ. Тулли
ахсем шатӑртатса пӗр-пӗринпе калаҫнӑ. Ҫак
ӑтрах Хуманӑн тепӗр „вашнӑй“ ӗҫ сиксе тухнӑ.
рамала. Вашнӑй ӗҫсенчен пӗри вӑл—ыраш
рма кайасси ӗнтӗ. Анчах Хумашӑн пулсан чи
нӑй ӗҫ-„Казански“, ӗҫкине кайасси пулнӑ...

Хума Лӑриванчӑ хӑйӗн ӑслӑ пуҫне йышлах та
ӗрсе тӑман, савнӑ маткине тӳрех ҫапла каланӑ:
— Мӗн васкас тырӑ вырма, арӑм, ҫӗр ҫынӑн ҫӗр
,—пирӗн пӗр ана анчах-ха, вырса пӗтерӗпӗр-
—тенӗ.
— Ырашне тӑкса йарсан... тенӗ Хумана арӑмӗ.
— Но-о-о, тӑкӑнса карӗ тата... А ӗҫкӗ?.. Ӗҫке
ан кай-ха, сан тӳпӳна никам та хӑвармасть. Ҫап-
ла-и?—ҫирӗплетнӗ Хума маткине савӑнтарас тесе.

Килӗшнӗ. Кайнӑ ӗҫке. Ӗҫнӗ икӗ кун. Йурланӑ,
ташланӑ—савӑннӑ самай. Хумханнӑ Хума ӗҫкӗре,—
сар ырашӗ уйра пӗр май хумханнӑ. Хума ним
айӑпсӑр икӗ кун мухмӑр тӳснӗ, тырӑ вырма тухасси
шӑп тӑватӑ кун тӑсӑлнӑ.

Пайан ҫӗр ҫын ҫӗр ана вырса пӗтерчӗҫ. Пирӗн
Хуман пӗр ани выртса йулчӗ уйах. Хума тӑватӑ
кун халӑхран кайран тухрӗ тырӑ вырма аран.
Ех, найан!

Пайан Хума ӗҫкӗре. Васкаҫҫӗ—тӑкаҫҫӗ тырра.
Пулса ҫитнӗ тырӑ тӑмасть пучахра. Сӑра курки мар
ҫав кунта, тытса чараймӑн ӑна. Пучахран йухать
ана ҫине.

Хумапа арӑмӗн ана вӗҫне тухма алӑ ҫитеймерӗ.
Каҫ пулчӗ. Тавӑрӑнчӗҫ киле, каҫалӑк йулчӗ хире.

Хума йашка ҫиме ларнӑччӗ. Кавлеччӗ ҫӑкӑра...

— Хума Лӑриванчӑ, патшалӑха тырӑ панӑ кви-
танци кӑтартмала, йалсовета пымала,—шаккарӗҫ
кантӑкран. Хуманӑн аларан кашӑк шакӑртах тух-
са ӳкрӗ.

— Ан тӗлӗнтерӗр-ха, ара... Ӑҫта васкатӑр капла.
Тырӑ вырса пӗтермен, итем тасатман, авӑн ҫапман.
Чирлерӗм мари ара, йултӑм халӑхран кайа,—пы-
тарать Хума намӑса. Хӑйӗн ҫинчен сирсе ывӑтасшӑн
намӑс витгине.

— Тара тытатпӑр пулӗ, ахалӗн алӑ ҫитес ҫук,—
Хума маткипе канашлать.

— Тытмала... Тытас пулать,—иккӗшӗ канашланӑ.

Кохозсемпе единоличниксем ыраш вырса пӗтер-
се патшалӑха тырӑ парса татрӗҫ. Пирӗн Хума ҫап-
лах вырмара, тырӑ вырать—пучах тӑкать.

Намӑса пӗлмен Хума ҫӗр ҫынӑн ҫӗр ана, пирӗнпӗр
ана тенипе питӗ те йӑнӑшнӑ.

Хуман ҫапла каласа тырри карӗ тӑкӑнса,—Хума
културчӗ йала. **Н. Майак.**

## Вӗҫекен ҫын

Вӗҫен кайӑксенчен чылайӗшӗсем хӗллене хирӗҫ
ӑшӑ йенне вӗссе кайаҫҫӗ. Мӗнле кайӑксем вӗссе
кайнине кашни уйрӑмӑн йатпах асӑнма кирлех те
мар пулӗ. Халӑхи вӑхӑтра етем йӑхӗ хушшинче те
ун пек кайӑксем пуррине йатпах асӑнма тивет.

Ку вара хӗлле мар, ҫулла вӗҫсе кайнӑ. Ку кайӑ-
ка хушаматпа чӗнсен Шапошников тес пулать.
Кайри Шӗнерпуҫ йалӗнчен Ҫичӗ Пӳрт йалне шкул
ӗҫне те, Осоавиахим пуҫламӗш организаци ӗҫне
те пӑрахса хӑварса, вӗҫсе тухса кайнӑ.

— Хӗлле пулсан килмеле те,—теҫҫӗ Кайри Шӗ-
нерпуҫ ҫыннисем,—анчах вӑл киличчен, чӗпписем
мӗн курӗҫ-ши? Чӗпписене шел—Шӗнерпуҫсем йӑ-
вӑрӑн хуйхӑраҫҫӗ.

Халӗ ӗнтӗ хӗл кунӗсем ҫывхарса килеҫҫӗ. Килсе-
нех, килес ҫула кӑкарса хӑварма „ӗҫ дисциплини“
йатлӑ вӗрен туса хатӗрлӗр. **Павлов-Ивле.**

# „Икĕ каччăн пĕр шухăш“
# йе Йетĕрнери ултав ăстисем

...Вĕсем пит те лăпкăн пурăннă.

Ирпе. 9 сехетре, портфĕлсене хулхушшисене хĕстерсе учрежденийе кайнă, кăнтăрла иртсен 4 сехет тĕлнеле килĕсене таврăннă, уйăхра икĕ хут шалу укçи илнĕ, унтан вара... нимех те туман. Никамах та кансĕрлемен вĕсене, пăлхатман,—хайсем те никам куçĕ тĕлнех те тăрăнма тăрăшман. Çапла каланă пулмала ĕнтĕ вĕсем хăйсене хăйсем:

— Ма хыпкаланас, ăçта васкас,—„тихонько да легонько“ пурăннине мĕн çиттĕр?..

Çасартăк Мускав представителĕ пырса тухни çеç çак икĕ çамрăк чинавник пурнăçĕн кăмпапа витĕнме пуçланă лăпкă кӳллине хумхатса йанă.

О-о!.. Кунта вара вĕсем чăнахах та Гоголĕн „Ревизорĕнчи“ леш Сквозник-Дмухановски хăйĕн хулине Хлестаков пынине илтсен ăнран тухса кайас патне çитнĕ пекех пулса тăнă, çав етем манерлех чĕтресе, тарласа, хашкама йерсе кайнă ..

Пытарса тăмăпăр, йĕркипех калăпăр: сăлтавсăр пулман ку. Сăлтавĕ—пит пысăк сăлтав!—пулнă.

Мускавран килнĕ представитĕл „Ревизорти“ Хлестаков йышши суйа тĕрĕслевçĕ мар, чăн-чăн тĕрĕслевçех пулнă, вăл Йетĕрне районĕнчи хутла пĕлменлĕхе пĕтерес ĕç мĕнле пынине, ликпунктсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслеме пынă.

Анчах та—тĕрĕслемели кунта нимĕн те пулман! Туман ĕçе, çук ĕçе мĕнле тĕрĕслетĕн-ха? Районĕпе пĕр йĕркелĕ ликпунт çук та—представитĕле мĕн кăтартса паратăн? Хăйĕн намăс курмали çеç вĕт вăл. Намăсĕ татах тарам-ха.., Ĕç маларах та кайма пултарат. Хĕл каçа нимĕн тумасăрах укçа илсе пурăнни тăрă шыв çине тухсан—ĕнсерен те чипчиперех çавăрса илме пултараççĕ. Выгăвăр парĕç, хаçатра пĕçертĕç профсойузран кăларĕç, тата—кам пĕлет!—сут умне те сĕтĕрсе тухĕç!

Çавнашкал шухăшсем пăлхатма тытăннă икĕ каччăн, икĕ чиновникĕн пуçĕсене.

(Каччисем **Митраковпа Баклушин** пулнă; пĕри—Йетĕрне районĕнчи политпросвет инспекторĕ, тепри—Раброс сойузĕн пуçлăхĕ).

— Шуткă мар вĕт... Йепле те пулсан хăтăлкаласа тухас пулат.

„Шыракан—тупат“, тенĕ пек, çак икĕ каччă хăйсене мĕнле хăтарасси çинчен шухăшласан-шухăшласан, „епĕр пит лайăх ĕçленĕ“ тесе каламали май тупса кăларнă. Тĕрĕссипе каласан—хăйех сиксе тухнă вăл.

Истори кун çинчен çапла пĕлтерет:

Чăн та хĕрӳ вăхăтра, Митраковпа Баклушин ăнран тухса кайасси патнех çитсе тăнă тух, вĕсенчен тахăшĕ Ваççилийĕв тенĕ учитле тĕл пулнă.

— Тусăм!—тесе чупса пынă вĕсем ун патне.—Емĕр манмăпăр сана, тусăм .. Çăл пире тархасшăн!

Унтан вĕсем Ваççилийĕва çавăрса илсе тем çинчен пит каçса кайсах пăшăлтатнă, аллисемпе сулкаланă, тем çинчен ĕнентерме тăрăшнă, ӳкĕтленĕ.

Ваççилийĕв тухса кайсан вара—вĕсен иккĕшин те сăнĕсем çуталнă, куçĕсенче темле ăшă кăмăллăх йалкăшса тăнă, вĕсем пĕр-пĕрин çине пăхкаласа, тулли кăмăлпа кулкаласа илнĕ.

— Пулчĕ...

— Хăтăлатпăр!

— Тăвăл иртсе кайат ĕнтĕ...—тенĕ вĕсен к çĕсем.

Ваççилийĕв тени, Митраковпа Баклушин ӳкĕтл нине парăнса (ара, начаљствăна йепле пăхăнма тăн-ха?) Йетĕрнери хăйĕн тăван йалне—Кăмакка сине çитсенех, шурă хут листи илсе, йалти пуçл мĕш шкултан вĕренсе тухнă çынсен йачĕсене çы са тухнă. Чылай пухăннă вĕсем. Ликпункт орг низацилемелĕх шăпах çитет!

Унтан—çурт тупнă, çуртне тĕрлĕ тĕрлĕ илемле нĕ, тасатнă, вара пуçламĕш шкултан вĕренсе ту нă „хутла пĕлмен çынсене“ пухса лартнă.

Пĕр ик кунтан Йетĕрне хулинчен районри п литпросвет инспекторĕ Митраков çак „ликпунт тĕрĕслеттерме Мускаври представитĕлпе кĕрле терсе çитнĕ.

— Акă,—тенĕ вăл,—пирĕн районри лайăх ли пунктсенчен пĕри... Тĕрĕслĕр!

Тытăннă лешĕ тĕрĕслеме.

Вулаттарса пăкнă—шăрантараççĕ çеç.

Çыртарса пăхнă—писсăрсем пекех тĕрлеççĕ.

Шутлаттарса пăхсан—„ликпунктра“ вĕренеке скерсем тепĕр шчетовотран та иртерме пултарн куранна.

Представитĕл тĕлĕнсех кайнă...

— Пит аван, пит аван, пултарулă ĕçлетĕр,—т мели çеç йулнă унăн.

— Вообшче епĕр начар ĕçлеместпĕр,—мухтан илнĕ Митраков.

Малала ку комеди çапла пулса пынă:

**Представитĕл:** Ликпунтра вĕрентекеннисем ка сем-ха вĕсем?

**Митраков:** Ку йалсем, колхозниксем, ĕлĕк хутл вĕренеймесĕр йулнăскерсем...

**Представитĕл:** Ликпунт нумайранпа ĕçлет-и?

**Митраков** (пăхăнса тăракан Ваççилийĕва куç хĕ се илсе). Виçĕ уйăх ĕçлет ĕнтĕ..

**Представитĕл:** Вĕсене вĕрентекенĕ, ликвидаторĕкам вăл, мĕнле çын?

**Митраков** (каллех Ваççилийĕва куç хĕссе). Вĕсен вĕрентекенĕ—ахаљ колхозник-куљтармейĕц...

**Представитĕл:** Аван, йулташсем. Питĕ кăтартул ĕçлетĕр. Сире кун пек матур ĕçленĕшĕн епĕр пре ми паратпăр!

...Алăк уçăлса хупăннă та, Митраковпа Муска представителĕ тухса кайнă. Ваççилийĕв ку таранччен нимĕнле мар пулса, хĕрелсе, тарласа тăнăскер, ти нех çăмăллăн сывласа илнĕ те, хăйĕн „ликпунктне“ киле йанă.

Текех вăл „ликпункт“ нихăçан та, ниçта та пу хăнман. (Тен, тепре пĕр-пĕр представитĕл пырса тухсан пухăнат те пуљ)...

Лайăхах пĕлейместпĕр: „куљтармейцă“ Ваçилийĕва нумай çĕрте мухтанă тет, премии те памала тунă тет. Епĕр çакна çеç пĕлетпĕр: хутла пĕлменлĕхпе кĕрешекен ушкăнăн тĕп совечĕн представитĕлне кăçал çуркунне çакнашкал улталаса, „куçлăх тăхăнтарса“ йанине Йетĕрнере пурте пĕлнĕ. **Л. Агаков.**

# Вĕренмеле те... шкулĕ йусав мар

Хăшпĕр йалçовечĕсем шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленессине пулăшса пымаççĕ.




— Миша, мĕншĕн пирĕн шкулăн чӳречисем ванчăк?
— Пирĕн йалсовет председателĕ шкулсене йуоатарма тăрăшмаинине пĕлтерет ĕнтĕ.

# Ап-папай, шăршă çуратӑ сăмсана

Хĕвел тӳперен хĕртет. Епĕ çак самантра Йĕпреç районĕнчи Хонтурла йалне çитсе кĕтĕм пашкаса. Хам утса ывăннă. Ман аламри кукăр туйа те ывăннă, те ывăнман, вăл мана нимĕн те шарламастӑ. Анчах епĕ Хонтурлара курнисене каласа парасшăнха.



Чи малтанах йаçли куртăм. Ку йаçлине кĕрсех курас-ха тетĕп ăшăмра. Кĕтĕм йаçлине.

— Страçтĕ,—суçа тайрăм пĕр хĕре.

— Страçтĕ, страçтĕ,—хĕр çӳхе тута хĕрисене, çемçе чĕлхине хускатса илчĕ.

— Ку йаçли-ха сирĕн,—ыйтатăп епĕ.

— Йаçли,—ответлет хĕр.

Алăк сасартăк уçăлса кайрĕ. Пĕр ача йатнă хĕрарăм йаçлине кĕрсе тăчĕ.

— Çакă-и йаçли,—ыйтатӑ хĕрарăм.

— Çакă,—ответлет хĕр.

— Пирĕн вите те кунтан таса,—терĕ те хай инке, алăка шалт уçрĕ те кайала тухса карĕ.

Куртăм, паллашрăм йаçлипе. Пăхма та хăрамала. Йаçлире тасамарлăх... Урайĕнчи çӳп-çапсене шăпăрпа мар, кĕреплепе тураса тасатас пулатӑ. Анчах, манăн алăра кĕрепле тавраш пулманни питĕ те шел вара. Ахалĕн епĕ çӳп-çапсемпе пĕрлех çав çӳхе тутине те унтан вĕçтерсе кăларнă пулмала.

**В. Йуманка.**

# Икĕ карчăк.

Канаш районĕнчи Кивĕ Шелтемре чăн пулнă ĕçрен.

Кивĕ Шелтем йалĕ пысăк,
Унта çĕр те çирĕм кил.
Йал пурăнатӑ урлă пирлĕ,
Кив йăларан уйрăлман;
Карчăккисем тĕшмĕш тирлĕ,
Куçсем лайăх уçăлман!
Ку йал тулли темĕн чухлĕ
Питĕ нумай интерес.
Кив Шелтемри новăçсене,
Вулаканăм, илтни ес?
Пĕр карчăкăн чире кайнă,
Тем çитменшĕн пĕр ачи.
Тапкаланатӑ чирлĕ майĕ
Пĕчĕк мăшлак Ваçили.
Вот мĕскерле чире кайрĕ
Карчăк ачи Ваçили!
Карчăк нумай шутламасăр
Чĕнчĕ пычĕ йумăçа.
Вот мĕскерле чĕнсе пычĕ
Сиккипех хай йумăçа!
Суккăр йумăç ăс-тăн пачĕ,
Питĕ лайăх карчăка;
Вот мĕскерле ăса кӳртет
„Тăнлă йумăç" карчăка!
—Ачуна—тет—ниш чир йернĕ,
Савнă тăхлач Кĕтерин;
Хĕртсурт сана пит çиленнĕ
Савнă тăхлач, илтрĕн-и?
Кăвар тупрĕç алтăрпала
Пĕсерет мур апа-пап!
Вот мĕнпеле сыватмала.
Паллах, шăтăк кăмпапа!
Шăпăр витĕр тĕтĕреççĕ
Хыт чирленĕ ачана;
Хай карчăксем улăхаççĕ
Çав вăхăтрах маччана,
Пӳрт çи витĕр, улăм витĕр
Кăлармала кăмпана;
Акă мĕншĕн кăварлатрĕç
Шăтăк-шатăк кăмпана.
Пӳрт çи витĕр кăларсассăн
Хай кăварлă кăмпана
Лĕпсĕртетрĕç çак „геройсем"
Питĕ канлĕн çывăрма!
Çурçĕр иртнĕ, йал тĕлĕннĕ
Çăптăраççĕ ыйăха;
Çăлтăрсем çеç тем калаççĕ
Мăнтай çутă уйăха.
Кĕтмен çĕртен сикрĕ тухрĕ
Кив Шелтемшĕн пысăк шар;
Вот мĕскерле телей пулчĕ
Йумăç „тăнлă" пулнă май!
Калама çук питĕ пысăк
Ах, пит шултра çакă шар.
Вăтăр тăхăр кил çулларĕ
Йăх йулмиччен хай пушар!
Вылăх-чĕрлĕх, тырă-пулă
Кăмрăк пулнă пит нумай;
Акă йепле—вĕри, çуллă
Çак ĕç—йумăç „чаплă" май!
Ачи-пачи макăраççĕ!
Йалĕпелех ай-ай-ай! **Марк Аттай.**

# Ҫӗнӗ чӗлхе

Вӗсем иккӗш те лапсамрах хула ҫыннисем пул-
. Ӗҫ тӗлне тӳррипе пыма пӗлмен. Аҫтан ҫакланнӑ
тан ӗҫ пахаланӑшӗн тапаланнӑ. Хулара пуранӑ
й иккӗшӗ те кӑштах куљтурланнӑ. Анчах вӗсем
патне тирпейлӗн пыма пӗлменнипе авторитет-
р ҫынсем пулма пултарнине хӑйсемех аван туйнӑ.
Хулара авторитетсӑр ҫын вӑл, пит те йапӑх ҫын,
се иккӗшӗ те пӗрмайах шутланӑ.
— Сана каларӑм вӗт хамӑр авторитета хӑпарт-
ла, терӗ ҫинчешке майри упӑшкине.
— Мӗнле хӑпартас ӑна,—тет хуп-хура ырхан-
к упӑшки.
— Акӑ, мӗнле... Паллах, епӗр тӳрӗ ӗҫлесе авто-
итета кӑтартайас ҫук, ҫӗнӗрен йапала шутласа ту-
с пулать, терӗ каллех тарӑхсах майри.
— Ухмах... апла професӑр пулма пултаратпӑр,—
рӗ майри ҫумӗнчен ахлатса сиксех упӑшки.
— А мӗнле йапала шутласа кӑларас, ӑна ӗҫле-
шкӗн пирӗн услови ҫук вӗт, тет упӑшки май-
не.
Ҫав хушӑрах сӑпкара выртакан ачийӗ, „мами
ппӑ тош" тесе хыттӑн ҫухӑрса йӗрсе йанӑ та,
ллех ҫывӑрса кайнӑ.
— А,-х-х-х,—тенӗ хуйхӑрхса йанипе пуҫне ҫӗк-
се майри.
— А мӗнле сӑмах вӑл„ мами паппӑ тош",-ый-
т упӑшки.
Анчах ку ыйту ҫине иккӗшийӗн те ответ пама
ҫитмен. Майри йаланах вырӑсла калаҫма йу-
тнӑ, упӑшки вырӑсла калаҫмасан та вӑл часах
келешнӗ. Анчах апла пулсан та майри упӑшки
ваш чӗлхине йуратса йаланах чӑвашла сӑмах-
мпе ачине те чӗннӗ, майри вырӑсла. Ачине пӗ-
вырӑсла, тепри чӑвашла чӗннӗ. Ҫавӑнпах та пу-
ачи икӗ ҫул ҫурӑ хушшинче те ни чӑвашла, ни
рӑсла тӗрӗс калаҫма вӗренеймен. Ачи Веҫӑ йатлӑ
лнӑ.
— Веҫӑ кил кунта, мами чӗчӗ парать—тенӗ ашшӗ
ине чӑваш чӗлхипеле. Майри вырӑсла ытларах
лаҫнӑ, анчах хӑш-пӗр вырӑсла пӗлмен сӑмахсене
чӑвашла, ни вырӑсла пӑтратнӑ. Майрийӗ ачине
рӑсла вӗрентесшӗн пулнӑ, упӑшки чӑвашлах ка-
ҫнӑ. Майрийӗ, Веҫӑ ӳссӗн вырӑсла калаҫма вӗре-
сси ӑна ытларах килӗшнӗ. Ҫапла ни вырӑсла,
чӑвашла сӑмахсене пӑтратнипеле ӗҫ йапӑха
йнӑ. Сӑмахсене пӑтратнипе пӗр йапалана пӗл-
рекен сӑмах икӗ тӗслӗ ӑнланма пуҫланӑ:
— Аҫ,
— Оҫ,
— Анне,
— Мами,
— Ӗҫ,
— Тӳтту,—
Тата ытти сӑмахсем те темӗн чухлӗ. Хӑш-пӗр
маххисем чӑвашла пулин те ик тӗслӗ тухнӑ.

Веҫӑ икӗ ҫул ҫурра ҫитнӗ. „Мами паппи тош"
нӗ сӑмаха вӑл ыйӑх тӗлӗшпе кӑшкӑрса темиҫе
т та каланӑ.
Вырӑн ҫинче выртакан лӗпӗш пек майрийӗ кун
ҫӑн шикленсе илнӗ пек пулнӑ.

* * *

Хӗвел чылайах йываҫ ҫӳллӗшех улӑхнӑ. Веҫӑ
сӑпкарах ҫывӑрнӑ Пахчари кантӑкран хӗвелӗ кӗнӗ
те майрисен пичӗ ҫине ҫап-ҫутӑ ҫутатса тӑнӑ. Се-
хет 9 ҫине ҫитет. Майрийӗ ҫӗрӗпех ҫывӑрнӑ хыҫ-
ҫӑн Веҫӑ сӑмахӗсемпе тӗлӗкре аташса ҫӳренӗ. Вы-
рӑн ҫине ларса улшӑнипе тӗлӗк калама пуҫланӑ.
— Хамӑр килтех... Веҫӑ тумланнӑ та урайӗнче
автобус пек ҫеҫ йарӑнса ҫӳрет,—тет упӑшкине
майри.
Ҫапла тӗлӗк каласа ларнипех упӑшки час-часах
ӗҫе кайа йулса ҫитнӗ.
Ҫавӑнпа та ӑна ӗҫрен те сирпӗтнӗ.

**Куҫ. Миш.**

## Тӗшмӗшлӗхсем халӗ те пӗтмен-ха

Тухтӑрсем калаҫниччен.



**— Ӗлӗк епӗр ҫапла тӗтӗрсех ача-пӑчасене лайӑх пӑхса ӳстеркӗччӗ те-ха,—терӗҫ карчӑксем ачисене шӑпӑрпа шӑтӑклӑ кӑмпапа тӗтӗрсе.**

# Лашасен çырӑвӗ

Пӗр ирхине пуштӑ çӳретекен мана алӑк урлӑ васкавлӑ çыру тыттарса хӑварчӗ. Пӑхатӑп çырӑвӑн адрӗсне, тӗлӗнмеле çыру. Лашасем çыру çыраççӗ: „Канаш“ колхозран, çӗнӗ Ипрей йалӗнчен, Сталин районӗ, Вӑтам Атӑл крайӗ, 3-мӗш бригадӑ лашисем çыраççӗ:

## „Ырӑ çынсем“!

Есӗр пирӗнтен, етем пекех шурӑ хут илсе çыру çырнӑшӑн тӗлӗнетӗр пулӗ. Тӗлӗнмелийех çук. Епӗр халех икӑ уран çӳреме тытӑнӑпӑр ӗнтӗ. Ӑнланса илӗр-ха, шухӑшласа пӑхӑр, мӗнле пурӑнас тетӗр есӗр выçӑ хырӑмпа. Пирӗн коңухсем талӑкра та пӗрре йӗркелӗ апат пани çук. Халӗ пирӗншӗн „пур çӗрте те столовӑй“. Пирӗн коңухсем çавна та ӑнланса илесшӗн мар. Ытти бригадӑсенчи лашасене симӗс курӑк çулса параççӗ, пирӗн коңухсен аллисем татӑлса ӳкесрен хӑраççӗ пулас, пире пӗлтӗрхи хытӑ улӑм та сайрарах лекет.

Çакӑн пирки хамӑр бригадира каласа пӑхрӑмӑр та, вӑл ним те тумарӗ. Бригадирӗ те пирӗн—Клементйӗв текенскер, ӳсӗр çӳреме ытларах йуратать, ерехе кӑмӑлать.

Ӗненсемӗр,ырӑ çынӑмӑр. Халӗ йалтах сывмарланса, суранланса, вӑйран тухса пӗтрӗмӗр. Пирӗнтен—хӗрӗх лашаран халӗ тулли кӗлте урапи туртаканни те вуннӑран ытла мар. Хӑшин çурӑмне ваттарнӑ хӑшне пусӗнчен çапса амантнӑ, хӑшин тата хӳр[е] чиккисем шӑтан-йухана кайнӑ, теприсем апат паманнипе вӑйран тайӑлнӑ. Çитменнине тата пирӗн бригадӑра пӗр йурӑхлӑ сӳсмен çук, ӑçта кайан—хулӑмӑрсене амантмасӑр тавӑрӑнаймастпӑр вара.

Малала татах çапла пулӗ-ши, пирӗн мӗскӗн пуçӑмӑрсене хӗрхенмӗç-ши ӗнтӗ. Пирӗн бригадӑ пуринчен кайа йулчӗ. Ытти бригадӑсем тырӑсем вырса кӗлтесем турттарса пӗтерчӗç ӗнтӗ. Пирӗн имшер вӑй-халӑмӑрпа, аманнӑ шӑмшакӑмӑрпа вӗсемпе мӗнле танлашас.

Мӗскӗнсене—пире хӗрхенсемӗр. Ан манӑр. Çырӑр. Пирӗн коңухсене—Тимошкина, Иванов Йакӑва, Анчикова, Анисимова пӗр-ик сӑмах хушса каламӑр ши.

Хамӑрӑн хуйхӑлӑ салампа ырӑ сунса йулатпӑр. (Виçӗмӗш бригадӑри хӗрӗх лаша ал пуснӑ).

Аван, аван лаша туссем. Сирӗн ку çырӑва „Капкӑн“ тус аллине паратӑп. Сирӗн, ерех ӗçсе урам тӑрӑх çӑвара карса çӳрекен бригадир Клементйӗва хыптарма „Капкӑнӑн“ йӗплӗ çӑмах хатӗрех пулакан.

**М. Йеник.**

---

# Çул çинчи картинсем



Шупашкарпа Мӑнсӗнтӗр хушшинчи мӑн çул çинче хӑшпӗр тӗлсенче автомобилсемпе çӳреме те майӗ çук.

**Шофӗр:**—Ай-ай-ай кунти пек пур çӗртре те çул йапӑх пулсан, машинсене ремонт мастӑрскисенче те кӑларма çукка вара.

---

## Çӳреме те хӑрамала

Ну, ку зеленӑй пасарта пыңчӑк вӑхӑтӗнче пилӗк таран пыңчӑкра ишме тивет.

Халӗ Шупашкара хула совечӗ ӑна сиссе чул сарма тытӑннӑ. Анчах чулне лайӑх тикӗслесе сарманнипе утма та хӑрушӑ. Урана улталаса мӑкӑлтаса пӑрахасси те курӑнсах тӑрать.

# Тутине пĕлеймĕн

Выртассен паллă писателĕ Чехов ресторансем, тĕрлĕрен столовăйсем çинчен чылай çыркаланă. Анчах, вăл Хĕрлĕ Чутайри столовăй çинчен çырман, çырма та шутламан пулмала. Хĕрлĕ Чутайри столовăй çинчен Чехов та çырачче пулĕ те, анчах Чехов Хĕрлĕ Чутайа çитсе курман, çавăнпа çырман.

Столовăй тесен, конешнă, есĕр хăвăрах чухлатăр, кунта кухњă та, апат çимели пӳлĕмĕсем те, ĕçлекен çыннисем те пулмала.

Хĕрлĕ Чутайри столовăй те ку тĕлĕшрен, калас пулать, „чин-чином, чест-честйу".

Алăкран кĕрсенех тăрхала вăрăм сĕтел, икĕ айакинче вăрăм тенкелсем; çтена çумĕнче виçĕ пĕчĕк сĕтел, çавăнтах тайлăк табуреткăсем; малта буфет; буфетпа йунашарах тепĕр пӳлĕме кĕмели алăк, анчах ку алăк йаланах хупă пулать. Кухњă тĕлĕнчи сулахайри çтенана касса тăваткал шăтăк тунă: ку „апат шăтăкĕ". Ку шăтăкран апат параççĕ. Апатне илме хăтланса вăрăм черетре тапăртатса тăраççĕ. Лартса панă апата, никçан та йĕркелĕ шăлса типĕтмен, столовăйĕнче вырăн çитменнипе ура çине тăрсах çикелеççĕ; кашăк çитмесен чашăк хĕррипе те—чей ĕçнĕ пек ĕçкелесе çийеççĕ.

.. Чутайра, тĕрлĕрен учреждениесем тăрăх çӳресе, чылай вăхăт иртрĕ. Хырăм выçнă пек туйĕнчĕ. Столовăйа кĕтĕм. Кухњă йенчен каснă тваткал шăтăк умĕнче черет. Чашăксем шăлт-шалт! тăваççĕ; чăпăлт-чапăлт! йашкисем сирпĕнеççĕ. Шăтăк витĕр апат паракан пĕрехмай кăшкăрать.

— На!.. Тыт!.. Пăрăн!..

— Мана пар!..

— Тăхта!.. Вилместĕн пулĕ!

Шăтăкран тухан апатсене тăккаласа сирпĕтсе сĕтел çине çĕклесе утаççĕ.

— Хырăм выçă, çимелех,—терĕм те буфетчик патне пытăм.

— Мĕн пур?—тетĕп.

— Йашка 1 т. 40 пус, гуљаш—1 т. 50 п., çăкăр 200 гр.—50 пус, сĕт 50 пус стаканĕ... Пурĕ 3 т. 80 пус пулать,—терĕ буфетчик. 3 т. 80 пус тӳлерĕм те, хăвăртрах çисе кайас-ха, тесе шалти пӳлĕме кĕме алăк уçрăм.

— Ăçта кайатăн?.. Мĕле талон?—тесе сăнвитĕр тĕлĕнче тăракан такана купарчалă официанкă ман ума чупса çитрĕ.

— Çапла, çапла... 3 т. 80 пус тӳленĕскер!..

— Тух, кунта кĕме йурамасть. Кунта кĕме кăвак талун кирлĕ... Санăн шурă,—терĕ те мана кайла чышнă пекех тĕксе кăларчĕ те алăкне шартлаттарсах хупрĕ. Капла пулсан епĕ буфетчик патне пытăм та:

— Шалта никам та çук, кĕрсе çиме кăвак талун парха,—тетĕп.

— Йурамасть!—терĕ буфетчик,—кайса тăр черете!.. Хирĕçетĕн пулсан милицине чĕнетĕп,—терĕ те буфетчик калаçма та пăрахрĕ.

— Хирĕçместĕп, мĕн хирĕçес?.. Шалта çынсем çук пирки, хăвăртрах çисе кайас тесе ыйтрăм,—тесе черете пырса тăтăм.

— А-а... Шала кĕме хотел, ача!.. Нет, черете тăр,—терĕ пĕри мантан тăрăхласа.

Вăрахăн шăвса пырсах шăтăк умне çитрĕм.

— Талон,—терĕ çивĕч, йăкăлти куçлă шалти хĕр.

Апата илтĕм, йашка çине пăхатăп. Тăрă шыв, çийĕнче икĕ шăна вилли, тĕпĕнче пĕр касăк çĕрулми хуйхăрса выртать. Йашкана тĕксе лартрăм та, лартăр еппин, тесе, çиме пăрахрăм. Гуљаш тенĕ есреметне хам умарах туртса лартрăм та, пăхатăп:

Пĕр пĕвер татăкĕ, тепĕр ӳпке татăкĕ, пыршă хуçăкĕ, тата таçтан тупăннă тепĕр шăмă ванчăкĕ... Айала чаврăм—унта тӳнĕ çĕрулми... çине сарă лăйма сапнă кăна.

— Мĕнчул кунта аш-какай?

— Аш тени çук. Ӳпке-пĕвер татăкĕсем пурĕ виçĕ турам, туртарсан 3—4 грамм туртаççĕ пулĕ. Ну, терĕм, мăшкăл... Пĕр стакан сĕтне тытрăм та ĕçме пуçларăм.

Çав хушăра пĕри чылай хулăм йĕнселĕскер тепри хыткантарахскер кĕчĕç те:

— Љготнăй обед! терĕç. Çав хушăрах талонсем илчĕç те шалти пӳлĕме кĕчĕç.

— Ну, тетĕп, кусене хайхи такана купарчали курсан... Сас-чӳ пулманнинчен тĕлĕнсе кăшт пырса алăка уçрăм... Пăхатăп... Пĕри Райсойуз пуçлăхĕ—Черноносăв, тепри—Райсойуз счетовочĕ Григорйĕв лара параççĕ.

— Не куљтурнăй хулăх!.. Кунта ни-ни!.. Вĕсенчен никама та ан кӳртĕр,—тет Черноносăв.

— Вопче, çăпатапа кӳртме йурамасть... Пускай лере çиччĕр вĕсем,—тет йултăшĕ.

Хай пасăрхи такана купарча жалăбă пара пуçларĕ:

— Пасăр пĕри вăрçсах кĕресшĕн... Кăкринчен персе кăлартăм...

---

Çапла Хĕрлĕ Чутайри столовăйĕнче пилĕк тенкĕ укçа пĕтерсе тухсан та есĕ хăвна хăв епĕ апат çинĕ пайан, тесе ан шутла. Мĕншĕн тесен апачĕ хаклă, апачĕн пахалăхĕ йапăх, çитменне апатне ура çинче, çăпаласăр, тарелкăран тӳрех çиме лекет сана.

Столовăй заведушчин çак çитменлĕхсене халех пĕтерме тăрăшмала.

**К. И.**

---

## Кĕрешӳсен пĕр майĕ.

**Пушарпа кĕрешекен инспектор:** Сирĕн йалта пушарпа кĕрешес ĕç мĕнле пырать?

**Колхозник:**—Епĕр кооперации лавкине спичкă илсе килместпĕр. Пушар пуласран ним хăрамали те çукка. Пушарпа пĕтĕм йалпăн йалпо кĕрешет.

Чăваш совет писателĕсен Сойузĕ

уйăхра пĕрре кăларакан

илемлĕ литературăпа критика журналĕ

# СУНТАЛ

Повĕçсем, калавсем, пĭессăсем, сăвăсемпе поемăсем, искусства ыйтăвĕсемпе теорилĕ тата критиклă статйасем, пародисем, епиграмсем, т. ыт. пичетлет. Журналта чăвашсен паллă совет писателĕсем, поечĕсем, драматургсем, критиксемпе публициссем ĕçлеççĕ.

## ЖУРНАЛА

кашни пуштă уйрăмĕнчех çырăнса илме пулаť

## Пурте çырăнса илме васкăр!

ЖУРНАЛ ХАКĔ:

3 уйăха—1 т. 20 пус,

6 уйăха—2 т. 40 пус,

12 уйăха—4 т. 80 пус.

УЙРĂМ НОМĔРĔН ХАКĔ **40** ПУС.

*Чечеклĕ çуркунне, чечеклĕ ир!*
*Çăвар тулли кулат ват кукамай.*
*„Кулма вĕрентĕмĕр ĕнтĕ епир“,—*
*тесе калат хăй кулнă май.*

**Социалисăм тăвакансен çĕнтерӳлĕ савăнăçĕ йĕритаврах кĕрлесе тăнă вăхăтра чăвашсен сатирăпа кулăш**

**ЖУРНАЛĔ**

# КАПКĂН

**кашни культурлă ĕççыннин килĕнчех пуласшăн.**

**ХАКĔ:**

**3 уйăха—75 пус,**
**6 уйăха—1 тенкĕ те 50 пус,**
**12 уйăха—3 тенкĕ.**

**Кашни пуштă уйрăмĕнчех çырăнса илме пулат.**


Сдано в производство 20-VII—34 г.
Подписано к печати 20-IX—34 г.
Секретарь и вып. редактор **И. ИЛЛАРИОНОВ.**

**Ответ. редактор: ГУР. ТИТОВ.**

Ст. ф. б. 200×280. Об'ем 1 п. л. Издательство газ. „Канаш“
Чувашглавлит № 1010. Г. Чебоксары, типография №1 Чувашгиза. Заказ № 927 Тираж 2350 экз.

# К а х а л




**К а х а л:** Филип Йермолайчă пошалстă мĕн-чулта пулин ĕçкунĕсем хушса пар-х

**Б р и г а д и р:** Сана хушса мар, ĕçленисене те катса йулмала пулаĭ-ха.